## «*Чĕвĕлти чĕкеç – 2024*»
## конкурс ыйтăвĕсем

### *8* – 9 классем валли

---

### 3 балл

1. Вăрăм та кукăр мăйлă, ярăнса ишекен шыв кайăкне мĕн теççĕ?
   (А) тăрна; (Б) хур кайăк; (В) кайăк кăвакал; (Г) чарлан; (Д) акăш.
2. *Пĕлни пĕлĕм* ... ваттисен сăмахне вĕçлĕр.
   (А) çитермĕ; (Б) тăрантарĕ; (В) çитерĕ; (Г) тăрантармĕ; (Д) пĕтерĕ.
3. *Синкер* сăмахăн синонимне тупăр.
   (А) телей; (Б) кăвак; (В) инçет; (Г) тинкер; (Д) инкек.
4. Тăрăхласа калаçакан çын çинчен мĕн теççĕ?
   (А) йĕплĕ чĕлхе; (Б) йĕплĕ хырăм; (В) йĕплĕ сăмса; (Г) йĕплĕ тута; (Д) йĕплĕ чĕре.
5. *Земляника* чăвашла мĕнле пулать?
   (А) çĕр çырли; (Г) улпут çырли;
   (Б) кӳкен çырли; (Д) шăлан çырли.
   (В) хурăн çырли;
6. Чăваш алфавитĕнчи çирĕм пиллĕкмĕш сас палли хăшĕ пулать?
   (А) ы; (Б) ç; (В) т (Г) ю; (Д) ӳ.
7. Пусăма (ударение) хăш сăмахра тĕрĕс лартман?
   (А) у´йăп; (Б) шаланкă´; (В) шă´нкăрч; (Г) хурчка´; (Д) çăхан´.
8. *Пятка* сăмаха чăвашла куçарăр.
   (А) ура кĕлли; (Г) ура лаппи;
   (Б) ура туни; (Д) ура пичĕ.
   (В) ура сыппи;
9. ... *çынни мăклă вырăнта пурăнма юрататъ* ваттисен сăмахĕнче нумай пăнчă вырăнне кирлĕ сăмах лартăр.
   (А) тутар; (Б) вырăс; (В) çармăс; (Г) чăваш; (Д) мăкшă.
10. Тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр.
   *Иртен Антун пичче*
   *Хăрах ури çинче.*
   *Çӳрет хĕвелпеле*
   *Мĕн аниччен пĕрле.*
   (А) мĕлке; (Б) сехет; (В) хĕвел çаврăнăш; (Г) хĕвел пайăрки; (Д) çутă.

### 4 балл

11. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан *туган* сăмах чăвашла мĕнле пулать-ши?
   (А) пукан; (Б) тăван; (В) кăлкан; (Г) айван; (Д) кăткă.

12. Шарада тупсăмне пĕлĕр.

*Тăратăп эпĕ ик пайран.*
*Пĕр пайĕ ман местоимени.*
*Тепĕр пайне куран сайра,*
*Курас пулсассăн пит шикленĕн.*

*Ик пайăма пĕрлештерсен*
*Сиенсĕр кайăк эп пулатăп.*
*Кăнтăр енчен вĕçсе килсен*
*Йăва таврашĕ çавăратăп.*

(А) шăнкăрч; (Б) шăпчăк; (В) тăрна; (Г) курак; (Д) чĕкеç.

13. Миçе *кăл* илсен гометри фигурин ячĕ пулать?

(А) 1; (Б) 2; (В) 3; (Г) 4; (Д) 5.

14. Чĕлхе наукин пуплев епле йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайне мĕн теççĕ?

(А) лексика; (Б) синтаксис; (В) фонетика; (Г) морфологи; (Д) фразеологи.

15. Чĕрĕ мар япаласене, çут çанталăкри пулăмсене чĕрĕ чун пек е этем пек сăнласа кăтартнине мĕн теççĕ?

(А) литота; (Б) танлаштару; (В) сăпатлантару; (Г) метафора; (Д) гипербола.

16. Ваттисем сăнанă тăрăх, йытă йăваланни мĕне пĕлтерет?

(А) çумăр çăвасса;
(Б) уяртасса;
(В) ăшăтасса;
(Г) сивĕтессе;
(Д) ниме те пĕлтермест.

17. Вырăссен *ни в медный грош не ставить* фразеологизмĕ вырăнне чăвашсем мĕнле калаççĕ?

(А) ылтăн пуса та ан хур;
(Б) кĕмĕл тенке те ан хур;
(В) тимĕр укçана та ан хур;
(Г) пăхăр тенке те ан хур;
(Д) çур пуса та ан хур.

18. ... *сĕрлеççĕ сăпсасем* предложенире нумай пăнчă вырăнне кирлĕ сăмах лартăр.

(А) чăштăр-чăштăр;
(Б) чăл-чăл;
(В) хăнтăр-хăнтăр;
(Г) сĕр-сĕр;
(Д) çăтăр-çăтăр.

19. Хăш сăмахсенче ь лартмалла?

(А) мăкăн..ĕн, супăн..ĕн;
(Б) мăкăн..е, супăн..е;
(В) мăкăн..пе, супăн..сĕр;
(Г) лагер..е, сирен..е;
(Д) лагер..ĕн, сирен..ĕн.

20. *Вĕсен ... миçе ача?* предложенире нумай пăнчă вырăнне хăш сăмахне çырмалла?

(А) çемьйинче; (Б) çемйире; (В) çемьĕрте; (Г) çемйинче; (Д) семьирте.

## 5 балл

21. Сăвăра миçе омоним?

*Чике старик хур сухал*
*Хур памасан хур тăвать.*

*Хур хурсассăн ун умне*
*Çавăрайăн кăмăлне.*

(А) 1; (Б) 2; (В) 3; (Г) 4; (Д) 5.

22. *Я катаюсь на санках* предложение чăвашла куçарăр.

(А) Эпĕ çунашкапа ярăнатăп.
(Б) Эпĕ çунашка çинче ярăнатăп.
(В) Эпĕ çунашкасемпе ярăнатăп.
(Г) Эпĕ çунашкасем çинче ярăнатăп.
(Д) Эпĕ ярăнатăп çинче çуна.

23. Сăвă йĕркисен авторĕ кам?

*Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем*
*Парсам пăлхавлă чунăма.*

*Пар чăнлăх, савăнăç, илем,*
*Пар ирĕк – çутăрах çунма.*

(А) К. Иванов; (Б) П.Хусанкай; (В) Митта Ваçлейĕ; (Г) А. Галкин; (Д) Г. Луч.

24. *Вăл урока <u>кăшт</u> кая юлса кĕчĕ* предложенире паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

(А) япала ячĕ;
(Б) паллă ячĕ;
(В) наречи;
(Г) местоимени;
(Д) хисеп ячĕ.

25. *Вуннăн, кил, валеç, пĕччен, икшер, çурă, вăрăм, çитмĕл, нумай, хĕрĕх, чĕрĕк* сăмахсем хушшинче миçе хисеп ячĕ?

(А) 3; (Б) 4; (В) 5; (Г) 6; (Д) 7.

26. Тутар чĕлхинчи *Минем телем – минем дошманым* ваттисен сăмахĕ чăвашла мĕнле янрать-ши?

(А) Манăн телейĕм – манăн тăшманăм.
(Б) Манăн чĕлхем – манăн тусăм.
(В) Манăм чĕлхем – манăн тăшманăм.
(Г) Манăн тусăм – манăн тăшманăм.
(Д) Манăн чĕлхем – мана пулăшаканăм.

27. ... *пусă чавать те, ... пырса пăтратать* ваттисен сăмахĕнче нумай пăнчă вырăнне кирлĕ сăмахсем лартăр.

(А) чĕкеç, çăхан;
(Б) шаланкă, курак;
(В) чăх, автан;
(Г) хур, кăвакал;
(Д) путек, кашкăр.

28. Пĕрмеллĕ сăхмана мĕн теççĕ?

(А) юпăнчă; (Б) сăхман; (В) халам; (Г) пӳштĕр; (Д) çипиркке.

29. *Пыратăп хырлăхпа, мана хирĕç ачасен шавлă ушкăнĕ çывхарать* предложенире запятой лартнин сăлтавне уçса парăр.

(А) çыхăну паллисĕр хутлă предложени пайĕсене уйăрнă пирки;
(Б) союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсем пур пирки;
(В) сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене уйăрнă пирки;
(Г) обращени пур пирки;
(Д) интонаципе уйрăмлатнă сăмахсем пур пирки.

30. Çак ребусра пытаннă тупмалли юмахăн тупсăмĕ мĕн пулать?

(А) велосипед; (Б) мопед; (В) квадроцикл; (Г) автобус; (Д) пăрахут.

